Н. ИЛЬБЕК

И Р Е Н А

К А Л А В

I

Иккĕшин те мĕлкисем шывра чĕтренсе вылянаççĕ. Тарăн курăклă çыран хĕррине вĕт çеç хумсем çапăнса чĕлтĕртетеççĕ те анатарахри кĕрленке кайса çухалаççĕ. Ёмĕрхи ват юмансем, кĕрленкĕ шавĕнче темĕнле канăçлăх тупнă пек, тĕлĕрсе лараççĕ. Таврара шăп. Кĕрленкĕ кĕвви çеç хускатать çав шăплăха. Ун кĕввинче, тимлерех итлесе тăрсан, темĕнле вăй, никама пăхăнми хăват пуррине туятăн...

...Анчах ăна итлесе тăрас пур-и вара чĕре вĕчĕрхенсе тăнă чух? Ёмĕте палăртасшăн çуннă чух çавна итлесе тăрас килет-и? Çук, ун кĕввипе савăнса тăма тухманччĕ паян Ирена, Стася та уншăн килменччĕ. Хăй çамрăкран юратнă Иренине паян вăл нимĕн тунмасăр пĕтĕм шухăшне каласа пама ёмĕтленсеччĕ— чĕлхе çыхланать, сăмахсем пĕр-пĕринчен именеççĕ. Стася вĕсене, нумайранпа ĕнтĕ, хăй ăшĕнче упраса усранă. Анчах Иренăна тĕл пулсанах таçта кайса çухалнă вĕсем. Пĕр сăмахне те калайман вăл. Упраннипех тăраççĕ пулĕ çав. Чимĕр-ха: саватăп, тейĕ ĕнтĕ ăна... Калĕ-ши вăл çапла? Çаплах калĕ-ши? Е ăш çунтармăш сăмахсем çаплах шухăш касмăкĕнчен вĕçерĕнсе тухаймĕç-ши?

Вĕсем шыв хĕррине çитнĕ чух хĕвел айлăмри йывăççен тăрринче кăна тытăнса тăратчĕ. Халĕ вăл пытанчĕ. Каçăн кăвак чаршавне васкамасăр пĕркенет тавралăх. Çăлтăрсем йăлтăртатма тытăнчĕç. Вăрман хĕрринче кăвать çути курăнса кайрĕ. Ут çитерме тухнă ял ачисен сассисем илтĕннĕ пек пулчĕç. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе кăвать сӳнсе ларнă пек пулать, çутă курăнмасть, ахăрнех ăна ачасем хупăрлаççĕ. Сарлака шоссе тăрăх хула еннелле васкакан машинăсем вĕлтлетсе иртеççĕ: çул аяккипе лартса тухнă йывăççем хушшипе силуэчĕсем кăна курăннă пек пулаççĕ вĕсен.

Стася Ирена аллине çепĕçĕн чăмăртарĕ. Мăшăр куçсем хире-хирĕç пулчĕç. Пĕр-пĕрин çине чылайчен тинкерсе пăхса тăчĕç... Атьсемĕрсем, епле калаçаççĕ иккен мăшăр куçсем, ĕненсемĕр, чĕлхе те кирлĕ мар иккен пĕр-пĕрне ăнланса илмешкĕн. Ирена чĕри хĕсĕнсе тапнă пек пулчĕ. Чĕлхе вĕçне капланса килнĕ сăмахсем Стаçăна канăç памарĕç.

— Ирена,—терĕ вăл çурма сасăпа,—эп мĕн каласшăн пулнине туятăн вĕт эс?

— Юрататăп тесшĕн пуль?—юрланă чухнехи пекрех, сассине çĕклентерсе çăмăллăн кулса илчĕ Ирена.

— Тĕрĕс.

— Паян тин паллă пулчĕ-и вăл саншăн?

— Апла каласшăн марччĕ эпĕ.

— Мĕскер тата?

— Сана эпĕ виççĕмĕш çул ĕнтĕ ĕмĕт пек, халлапри пек юрататăп,—шăппăн шăранчĕç Стася сăмахĕсем.

— Савса пурăннă, имĕш?

— Пĕлсем, Ирена, ăна нимĕнле хăватпа та таяс çук.

Ирена ăна хăй те лайăх ăнланать. Уншăн ку сисĕм тахçанах паллă, пĕр-пĕрне çывăх курса тăман пулсан, вĕсем, каçсерен тенĕ пек курнăçман пулĕччĕç.

Стася Иренăшăн тивĕçлĕ ар пуласси çинчен сăмах та вакланман. «Мĕнех вара, Стася халлĕхе ĕçсĕр пурăнать... Ёмĕрлĕхе мар-тăр?»—шухăшланă Ирена ĕлĕкрех, иртнĕ çулсенче. Унтан вара çулталăк иртет ĕнтĕ. Стася çапах та ĕçе кĕреймест. Халь ĕнтĕ Ирена хăйне хăй урăх ёмĕтпе лăплантарма тăрăшать. Кулянсах каймасть вăл. «Мĕн тăвас тен, ан тив, хура çăкăр пултăр, эппин, хыт çăкăр кăна пултăр,—тет вăл,—ăна та пулин çурмалла пайласа çийĕпĕр». Вăхăт иртнĕçемĕн пăшăрхану пĕтĕм шанчăка çухатас хăрушлăхпа ылмашнă. Мăшăрланĕç, тейĕпĕр, ĕнтĕ вĕсене; пĕрле пулĕç. Мĕнпе пусчăр-ха вĕсем пурнăç кăкарĕ çине? Мĕнпе ураланччăр? Çавăн пиркиех вĕсем, пĕр-пĕринпе курнăçсан, çулĕсем çитсе пынă пулин те, мăшăрлă пуласси çинчен сăмах хускатман. Сăмах хускатнă пулсан мĕн пулнă пулĕччĕ вара? Усси пулĕччĕ-и? Ирена ăна-кăна хăех лайăх туять ĕнтĕ... Анчах—кăмăл, кăмăл, пусăрăнма, лăпланма пĕлмен кăмăл хăйĕн ĕçнех тăвать. Пурнăçăн илемĕ те çамрăклăх хавалĕнче кăна чи аслă хисепре тăрать-çке, пасса!

Таврана сулхăн пусса илчĕ. Кĕтмен çĕртен çил вĕрсе иртет. Вăрман хыçĕнчи хура пĕлĕтсем васкаса хăпараççĕ. Çиçĕмĕн ылттăн турачĕсем, тĕксĕм пĕлĕтсене шăтарса, таçта аяккалла сирпĕнеççĕ.

— Кайăпăр,—терĕ Ирена, Стасяна аллинчен тытса.

Хирти тăвăр сукмак хула çывăхĕнчи мăн çул патне çитиех авкаланса выртать. Сукмак икĕ енĕпе çемçе уçăм хăпарать.

— Епле сисмен эпир çакăн пек каç пуласса?—ыйтрĕ Ирена, пăшăрханнă сасăпа.

— Çумăр пулас çук вăл, çил-тăвăл пулмалла.

Вĕсем тӳрем уй урлă каçса çырма хĕррипе утрĕç. Хула таврашĕнче, Стаçăсен хваттерне çитес чухне, шултăра çумăр тумламĕсем ӳккелеме пуçларĕç.

Таçта катара малтанхи аслати тарăнăн анасласа илчĕ. Тăвăнса çитнĕскер, вăл сывлăш çавăрса ярасшăн пулчĕ пулас, вĕçĕ-хĕррисĕр кĕтессенчен янăраса килчĕ те, сивĕ сĕлекисене сирпĕнтерсе, йăлтăрлатăр хĕлхемĕн сĕвемĕсене çитмĕл те çичĕ хутчен хуçлатса, хаярăн ятлаçма пуçларĕ. Унтан пĕтĕм пĕлĕт ланчашкисене çитсе хыпашларĕ пулас та, ниçта чарăнса тăмалли йăва тупаймасăр, кирпĕч савăчĕ патĕнче кĕмсĕртетсе таçта шăпланчĕ.

II

Ирена апат тунă хыççăн сĕтел хушшинчен тухрĕ. Ашшĕ ун çине каллех темĕнле хĕрхенерех пăхрĕ. Мĕншĕн апла пăхнине Ирена тĕпчесшĕн те марччĕ. Анчах ашшĕ, йывăрăн сывласа илсе, хăех сăмах хушрĕ:

— Хĕпĕртесе тăр, Ирена,—терĕ вăл сулăмлă сасăпа,—аçу сана нихçан та кӳрентерес çук.

— Мĕншĕн апла калатăн?—именсе ыйтрĕ Ирена.

— Хуçа килчĕ паян, çав... ирсĕр ростовщик, сăхăм усламçи. Килчĕ те... аннӳпе иксĕмĕр хытсах кайрăмăр.

Ирена шартах сикрĕ.

— Хуçа... Усламçă... Мĕнле те пулин инкек пулнă-ши вара?—тавçăрса илме тăрăшрĕ вăл.

— Инкекрен те ытларах...

Ăшшĕ кăвак картусне пусарах лартрĕ те, пӳртрен тухса кайрĕ.

Ирена сĕтел çинчи чашăк-тирĕксене пуçтаракан амăшĕ патне пычĕ.

— Мĕн пулнă аттене?

Куçкĕски тĕпренчĕкĕ çине ӳкнĕ хĕвел çути пек йăлтăртатрĕç амăшĕн куçхăрпахĕсем.

— Кала хăвăртрах, мĕн пулнă сире?

— Ан хăра, хĕрĕм, нимĕн те пулман.

„Ăнсăртран сăрхăнтăр-им куççуль тумламĕ, нимĕн те пулманран-им?.. Мĕншĕн каласа парасшăн мар эсир мана?“—теççĕ Иренăн амăшĕ çине шикленерех пăхакан илемлĕ куçĕсем. „Мĕншĕн ашшĕ ăна кӳрентерес çук терĕ-ха?“ Тавçăрса илме çук.

— Хуçа килчĕ пирĕн пата.

— Ну!

— Ватă урçа вăл, ĕмĕтсĕр, сана хăйĕн шыçмак аллине тăсасшăн,—татăлса тухрĕç амăшĕн тăвăнса çитнĕ сăмахĕсем.

— Çавă кăна-и?—тĕлĕннĕ пек пулса ыйтрĕ хĕрĕ.

— Çавă кăна-и, тетĕн, çав намăса ăçта чикес пур, хĕрĕм,—ăнтăхсах кайрĕ амăшĕ.

Ахаль те чирлĕскер, самантлăха вăл сывлайми пулса кăвакарса кайрĕ; каярахпа тин сывлăшне çавăрса ячĕ.

— Ăссăр тесе ан шутласам мана, аннеçĕм. Хама хам паллатăп-ха эпĕ.

— Епле хăйса килме пултарать çав ăншăрт. Чухăн рабочи кил-йышĕ тет пулĕ-ха, хваттершĕн икĕ уйăх ытла тӳлеменччĕ, çавна пĕлсе тăркачă, кайса килем-ха унта, тет пуль. Виççĕмĕш хут килчĕ вĕтха вăл аçу патне. Яхăнне алăк урати çине пустарас çук та...

— Эсир ăна чăнласах каласать тетĕр-им?

— Ирена, чăвласах килет вăл.

— Сӳтĕк Стефан!

Ирена çав хĕрлĕ питлĕ сăхăмça хăй асĕнче ӳкерчĕ. „Маййр сăмса... Пулать вĕт-ха çавăн пек лăтăркка этем. Хашкаса кĕрет пулĕ-ха çак алăкран, мăчăлти куçĕсем ун-кун пăхкаласа хĕсĕнеççĕ пуль. Çаварне те хупаймасть-çке вăл... Иĕрĕнчĕк тутисем пĕрмай усăнса çӳреççĕ... Кам шухăшлама пултартăр-ха çав ӳпне çăпан пек вельможнăй пан Иренăна чун шăрпăкĕ вырăнне палăртасса? Вăт вĕт, кăвак тӳпе çине тăрăннă шăрпăк! Хăйне вăл, эпĕ пуян тет ĕнтĕ, шик шăхăрса пурăнатăп, тет, какай сутатăп, тет. Хăйне кура унăн лавки те пур. Уçă кăмăллă Иренăна кавча илсе ярас терĕ пулĕ-ха, йĕксĕк...“

Ирена йĕрĕнсе кулса илчĕ. Амăшĕ ун çине, яланхи пекех, тунсăхласа пăхрĕ. Иренăн кĕлетки, чăн та ĕнтĕ, кĕрнеклĕ, хулпуççийĕсем урлă çивĕтĕсем усăна-усăна анаççĕ, мĕнне калăн ĕнтĕ, пиçсе çитнĕ улма пек хитре унăн сăн-пичĕ. Çамрăк вăл, чечен... Амăшĕ ун çине пăхса илчĕ те тарăн шухăша кайрĕ.

Чӳрече умĕнчи хир виноградĕн çулçисем пĕр-пĕринпе пăшăлтатнăн хускала-хускала илеççĕ. Урамра çине-çинех машина сасси илтĕнет. Иртен-çӳрен çынсем шăпăлтатса калаçаççĕ, кулаççĕ, васкаççĕ.

Ирена шухăша кайрĕ.

Чӳрече айлăкĕ витĕр сивĕ çил кĕнĕ пек туйăнать. Мĕнле сивĕ çил вĕртĕр-ха çак хĕвел пек чуна çывăх çурхи вăхăтра? Çапах та ăна теменскер çӳçентернĕ пек туйăнать.

Тулта хура тĕттĕм каç тăкăнать. Катара темиçе хутлă çуртсем. Вĕсен чӳречисенче тĕрлĕ тĕслĕ çутăсем ялкăшаççĕ. Унта хулари чиновниксемпе офицерсем, усламçăсемпе банкирсем пурăнаççĕ. Ĕçкĕçикĕ ирттереççĕ пуль вĕсем, шавласа юрлаççĕ пуль, ташлаççĕ пуль... Мĕн каласа кулĕ-ши Стася çав Стефан пирĕн пата килнине пĕлсен? Мĕн шухăшлать-ши йӳнсĕр усламçă...

Ирена шухăшĕ чул кăшăлпа пиеленнĕ пек тăвăнчĕ. Ĕмĕтсем, çăра тĕтре ăшне путса, урăх нихăçан тавранми çухаласса туйăнаççĕ. Вăхăт тени ĕмĕр ĕмĕтне çеç ситретнипе çырлахмасть мĕн, мĕскĕн чуна та пăчăртать иккен вăл, калас сăмаха та шăпах вăта çĕртен татать. Тĕнче пек аслă ĕмĕтсене арпаштарса пĕрчĕклесе вĕçтерет. Мĕншĕн çав шăпа Ирена çине ӳкет-ши, мĕншĕн айăплă-ши вăл?

III

Вырсарникун хайхи Стефан каллех Иренăсем патне лапăстатса пычĕ. Пĕчченехчĕ ун чух Ирена, халĕ çеç çĕлесе пĕтернĕ кĕпине пăхса хĕпĕртесе ларатчĕ.

— Ăçта сирĕн килйышăр?—сӳрĕккĕн ыйтрĕ Стефан.

— Хулана кайрĕç-ха.

— Пит аван... апла, эсир... пĕччен кăна юлнă пулать-ха?

Сивĕ, пăр пек сивĕ кăмăлпа пăхса илчĕ ун çине Ирена. Лешин мухмăрлă куçĕсем хĕрелнĕ, ытла та ӳркенсе пăхнăн туйăнчĕç вĕсем Иренăна. Стефан сĕтел патĕнчи пукан çине тĕшĕрĕлсе ларчĕ. Ирена сывăхнерех ларасшăн пулчĕ вăл. Каучук çуха ăшне аран шăнăçакан хĕрлĕ мăйĕ ун, хăпарса, хăмпăланса тăнăран пулас, шыçнă пек курăнать. Çăмламас аллине вăл сĕтел çине хучĕ. Кĕске пӳрнисемпе тăкăртаттарса илчĕ. Унăн ачасене хăратакан сăн-питне хăйне тивĕç сăнар кĕртме хура кăшăллă куçлăхĕ çеç çитейместчĕ... Куçлăхĕ терĕмĕр-и? Ан иккĕленĕрех:—сылтăм аллине шалти кĕçъине чиксе темĕн муталаннă хыççăн, хайхи хура кăшăллă куçлăхне те туртса кăларчĕ вăл. Вăт хайхи лайăх та, лавкара тăнă чухнехинчен нимĕнпе те уйăрма çук, çĕççи кăна çук аллинче...

Стефан сĕлĕ пĕрчи пысăкĕш куçĕсене васкаса мăчăлтаттарма пикенчĕ. Сасартăк темĕнле сасă илтĕннĕ пек туйăнчĕ, таçта урамра, аякра пушăлла ĕçлекен машина кĕмсĕртетнĕ пек пулчĕ. Чӳречерен пăхса илчĕ-илчех Ирена. Çук унта нимĕнле машина та. Кĕмсĕртетни хăйăлтатнă сасăпа ылмашăнчĕ, çакна илтсен тин тавçăрса илчĕ Ирена. Стефан ăна темĕскер каласшăн мĕн... Тĕрĕс те:

— И-и-рена, Ирена, эпĕ сирĕн пата килсеттĕм.

— Пирĕн пата килсеттĕр пулĕ те, килте никам та çук-ха.

— К-кăштах ăнланаймарăр-ха эсир мана...

Куçĕсем ун Ирена çине тăрăнчĕç. Малтан вăл йăрăм-йăрăм уйăраларах тăракан сарă çӳçне куçларĕ. Тарăн кăвак куçсен хăватне тӳссе тăраймарĕ пулас—çаврашка та илемлĕ янахне асăрхарĕ. Унтан хĕвел çинче кăштах шупкалнă чăлхине, куçа илĕртекен пушмакĕсене пăхкалам пекки турĕ... Епле хаяр пулмалла çав куçсем! Ирена хăй темĕнрен шикленнине туйрĕ. Именӳ пулмарĕ ку: Стефан умĕнче çаппаçарамас тăнăнах туйăнчĕ, лешĕ вара, хăй умне пырса хунă какая тĕрлĕ май çавăркаласа пăхнăнах, сăнаса пăхать пек.

— Кăштах ăнланаймастăр эсир мана, Ирена. Шухăшăма сирĕн çинче тытатăп. Тăваттăмĕш теçеткери çурма çула çывхаратăп, çавна пĕлнĕ пулăр эсир. Таçта катари палламан еккерсем çумне çулăхас мар тетĕп, пуянлăхăм хăвăра паллă, банксенче

ман пурлăха вуншар пин злотыхсемпе хисеплеççĕ. Сире хисеп кӳрес кăмăлăм пур...

— Епле намăс мар сире, пан Стефан, мĕн сӳпĕлтететĕр эсир?..

— Мĕ-ĕн (тахçанччен „ĕ“ тени янăраса тăчĕ)? Мĕн тетĕр эсир? Намăссăр тетĕр-и? Чăрсăр, кала-ха, кама намăс пулмалла?—сăхăмçă ларнă çĕртен аллисемпе тĕренсе çĕкленчĕ,—ак тамаша, вăл м-мана палламасть пулать, виçĕ çул ман çуртра пурăнать—хуçана палламасть... Й-юрĕ, паян эпĕ сирĕн хисепĕрте сăхăмçă пулам ĕнтĕ, анчах пĕлетĕн-и эсĕ, ыран эпĕ воевода, тепĕр кунне—министр, пĕлетĕн-и çавна, тинĕсрен тинĕсе çити Польша хывакан министр—во кам эп!..

Стефан аллисене сарса маччаналла çĕклерĕ:

— Министр мăшăрĕ пуласран хăратăн иккен!

— Эх!..—калас сăмахне çыртрĕ Ирена.

— Итле, Ирена,—терĕ Стефан, сасартăках йăвашланса,—этем вăл—ячĕ çеç этем, пурлăх пултăр, вара тĕнче çавăрма пулать. Çур Европăна ак çакăнта тытма пулать (вăл çутă пăчăра кĕрекен жилет кĕсъине тĕллесе кăтартрĕ). Инкек мĕскер иккенне пĕлес çук эсĕ. Аçу-аннӳ лайăхрах пурăнĕ. Хăвăра хĕрхенсе калатăп. Çавăн пек чыса та йышăнмалла мар-и?

— ...Чыс, тетĕн... мăшкăл чысĕ!—чăтса тăраймарĕ Ирена.—Çухал куç умĕнчен, кай хăвăртрах!—пикенсех хăтăрса тăкрĕ ăна Ирена.

— Эп... эп... мĕн хăтланан, Ирена, мĕскер хăтланатăн...

Кутăн-кутăн чакса пычĕ Стефан уçă алăк патнелле.

— Кай кунтан! Халех кайнă пултăр! Министр...—хыттăн кăшкăрса тăпăртатса илчĕ Ирена.

Стефан хăйне мĕн пулнине тавçăрса илме ĕлкĕричченех алăк леш енне тăрса юлчĕ. Ирена алăка шалтлаттарса хупрĕ те çаклатса хучĕ. Чĕтĕрекен аллисемпе пуçне хĕстерсе тытрĕ, çиллине шăнараймасăр, татăлса йĕме тытăнчĕ.

Çав ирсĕр Стефансен тарăхĕнчен ĕмĕрлĕхех çĕр минне кайса çухалĕччĕ вăл. Курмĕччĕ вăл вĕсене, пĕр-пĕр кĕтесре канăçлăх тупĕччĕ. Инкекрен хăтăлĕччĕ. Алăри вĕри кăвара пĕрин çинчен теприн çине сиктерсе вылянтарнă пек, Иренăн шухăшĕ те кунçулăн аслă чĕрки çинче выляннă.

— „Хисеп тăвать, имĕш“,—тенĕ вăл хăй ăшĕнче.—Йăли çаван пек ĕнтĕ вĕсен. Хăйсен сăнарне пăхмаççĕ, яппшар сăмахĕсем витĕр хитре ĕмĕтсем сунма пăхаççĕ, таса чăнлăх çинчен те вĕрентме хăйĕç вĕсем“...

Кирек мĕнле пулсан та, Ирена кăмăлĕ сăхăмçă енне туртăнас çук. Епле кӳреннĕ пулĕччĕ-ши тĕнче, хăйĕн кăкăрĕ çинче çак вельможа пурăннине асăрхаса илсен? Çапла çав, мăшăр тӳшекĕ çинче выртмалла пулсан та, тĕнче пекех кӳренсе ылханнă пулĕччĕ Ирена та.

Тарăн та йывăр шухăшсем вĕри куççулĕ витĕр сăрхăнса йĕри-тавра сапаланаççĕ.

IV

Выртмаллипех чирленĕ Ирена амăшĕ. Юлашки кунсенче вăл хăйĕн сывлăхĕ начарри-мĕнне уясах тăман, тек-текех тухкаласа çӳренĕ. Пӳртре чĕрĕ. Çавăнпа, хай, йĕпе çине сапа тенĕ пек, вăл ӳслĕкпе кăна мар, пуç ыратнипе те аптрарĕ. Малтанласа вăл хăй чирлĕ иккенне палăртасшăн пулмарĕ. Ура çинче çӳресех ирттерме ĕмĕтленчĕ. Анчах пыра-киле вăл сывлама йывăррине сисе пуçларĕ, куç-пуçĕ хуралса килнине туйрĕ, юнлă сурма тытăнчĕ.

Ирена чирлĕ выртакан амăшĕ патĕнчен туха пĕлмерĕ. Виçĕ тавлăк хушши вăл, куç хупмасăр тенĕ пек, ун пуçĕ вĕçĕнче ларчĕ. Кӳршĕрен тупса килнĕ имсемпе сипленĕ хыççăн кăна, çутăлас умĕн, амăшне кăштах çăмăл пек пулчĕ. „Сывалин, юрĕччĕ, юрĕччĕ“ тесе, Ирена таçтан пĕр стакан вĕретнĕ сĕт тупса килчĕ. Укçасăрах тупрĕ вăл ăна: çынна хĕрхенекен пурах çав.

Ирена хăйĕн амăшне хисепленĕ. Хисепленĕ çеç те мар, вăл ăна хăйĕнчен тем тĕрлĕ мала хурса сума сунă. Халь те акă, хăйшĕн çеç пулнă пулсан ĕнтĕ, çав сĕте тутанса та пăхас çукчĕ вăл, анчах ун амăшĕ чирлĕ-çке.

— Ĕç-ха, ĕç, анне, часах чĕрĕлетĕн акă,—терĕ вăл, кăшт кăна куçне уçнă амăшне йăпатса.

Пит асап пулнă амăшне хăрах чавси çине тĕренмешкĕн. Кăштах сыпрĕ вăл сĕтне.

— Эс,—терĕ хайхи, кăкăрĕнчен теменле йывăрран тухакан сассипе,—ан хăра, Ирена... Часах сывалатăп акă, сывалатăп. Каçсерен çеç кансĕртерех пек... Эс, Ирена, ан кулян...—Ун куçĕсем йĕпенчĕç.—Улача кĕпе тăхăнтарăр, ытлашши тăккаланмалла ан пултăр... йăмăка чĕнтерĕр, эс ху манран ан ютшăн...

— Мĕн каласан эс, анне!.. Кирлĕ мар, лăплан,—Ирена халь-халь макăрса ярас пек тăчĕ.

Амăшĕ выртать, ун хупăнсах çитмен куçĕсем мачча çинелле ăнтăлаççĕ. Ирена амăшĕн çамки çине йĕпе тутăр хучĕ. Амăшĕ ун çине кулнă пекрех, темĕнле ачашшăн пăхса илнĕн туйăнчĕ. Ирена кăштах лăпланнă пек пулчĕ. Халь ĕнтĕ вăл, тек чăрмантарас мар тесе, амăшне калаçтармарĕ.

Часах ашшĕ те кирпĕч заводĕнчен ĕçне пĕтерсе таврăнчĕ. Паян вăл аллă дека шурă çăкăр туяннă.

— Шăл çемми пулма кирлĕччĕ,—мăкăртатса илчĕ вăл, калаçсах кайманскер,—сан мĕнле пулин те апатран татăлмалла мар,—терĕ вăл шăппăн Ирена амăшне.

— Укçа... пачĕç-им паян?—ыйтрĕ Ирена амăшĕ.

— Пачĕç...—хăй çав вăхăтрах ăшĕнче шухăшласа илчĕ: „Пачĕç, тетĕп, ячĕ пур; уйăх укçи шăпах çăкăрпа улма туянма çур уйăхлăха çитĕ-и?“—Мĕнле пек-ха сана? Самай пек-и?

— Çăмăлтарах,—лăплантарчĕ ăна Ирена амăшĕ. Хăй çав вăхăтрах йывăррăн сывласа илчĕ.

Ашшĕ килте пуррине кура, Ирена пиçиххине çыхрĕ те, йывăç кĕлеллĕ пушмак пекскерне тăхăнса алăк патнелле утрĕ:

— Часах таврăнăп эпĕ.

— Ăçта каяс тен, тухтăр патне мар-и?—ыйтрĕ ашшĕ.

— Тухтăр патне.

— Юрĕ.

— Кайма кирлĕ мар, Ирена,—терĕ амăшĕ.

Анчах Ирена ун сăмахне итлесе тăмарĕ, тухса кайрĕ. Вăл хăй паллакан врачсем патне кĕркелесе тухрĕ. Крашевский—килте çук, имĕш. Резняксем алăкне питĕрсе хунă. Фурмановичсем патне ахаль те час-часах çӳреме тӳр килет, унтан халь кăна сĕт илсе килнĕ, çине-çинех кĕрсе çӳреме лайăх мар... Юлашкинчен вăл Пшибышевскисем патне çитрĕ. Хăшпĕрисем ăна, хăйне кура, ăста врач теççĕ. Ирена ĕмĕчĕ унта кĕрсе тухассипе кунăçрĕ.

Тимĕр решеткеллĕ алăк умĕнче ăна пĕр пĕчĕкçеç черченкĕ йытă кĕтсе илчĕ. Ирена хапха юпи çумĕнчи пĕчĕк кнопкăна пусрĕ, таçта шалта—шăнкăрав сасси тĕпренсе çухалчĕ. Алăк уçалчĕ.

— Килтехчĕ-ши врач?—ыйтрĕ Ирена, алăк уçма тухнă хĕрарăмран.

— Килтех пулма кирлĕччĕ.

— Курса каласшăс тесеттĕм...

— Пысăк çăмăлпа-и?

— Аппаçăм, ун пирки кайран каласшăпăр.

— Чимĕр-ха, эппин, кайса пĕлтерем эпĕ.

Решеткене хупăрласа илнĕ ешĕл çулçăсем чӳхенмеççĕ. Вĕсем çинчен ирхи çумăр тумламĕсем сăрхăнса анаççĕ. Шăрçаланмах ĕлкĕреймен тумламсем, хĕвел ярăмĕ тĕлне пулаççĕ те, симĕсĕн-кăвакăн ялкăшса çуннăн йăлтăртатаççĕ. Тахçан вăраннă вĕçенкайăксенчен хăшĕ-пĕрисем халĕ те юрлама пăрахман-ха.

— Пан Пшибышевский сире кĕтсе илме хатĕр,—пĕлтерчĕ хайхи хĕрарăм.

Пшибышевский врач кĕнекери ӳкерчĕксене пăхкаласа ларать мĕн. Ирена пӳрте кĕрсен вăл, темĕн кавленĕ пек туса, ура çине çĕкленчĕ те куçлăхне тӳрлетерех лартрĕ.

— А-а, пикеçĕм, хĕпĕртесех кĕтетĕп сире. Эсир ман пата килнĕ темерĕç-и, мĕнпе усăллă пулма пултарăп-ши?—ыйтрĕ вăл тараватлăн.

— Сирĕн пата тесех килсеччĕ эпĕ. Пĕр эсир çеç çăлса хăварма пултаратăр вăл инкекрен.

— Тархасшăн...

— Анне вилес пек выртать, вĕрĕлчĕ пулмалла, шăнса пăсăлчĕ-и...

— Ну!

— Сире тархаслама килтĕм.

— Ĕçĕ çавă ĕнтĕ, анчах...

— Çав анчахĕ пĕтерет те пире, пăтăрмах пулса тăрĕ-ха: халь эпир сире тăватă злотыхран ытла тӳлейрес çук... Ыттине çитес вăхăтрах парса татăттăмăр.

— Э-э, ун пек сăмахсем пулкалерĕç те-ха, тăватă злотыхшăн... пырса пăхма пулĕ, унтан ытлашши...

Пшибышевский пит-куçĕнчен хĕпĕртӳ йĕрĕсем пĕрĕнсе пытанчĕç.

— «Тăватă злотых тетĕр»—мăкăртатрĕ вăл сăмси айĕпе.

— Çапах... эсир мана паллатăр пуль вĕт?

— Ӳкĕте кĕрсемĕр, пан Пшибышевский...

— Çавна калани, вельможнăй темеллеччĕ тата... Пĕр сăмах çеç хушса каламаллаччĕ. Мĕ-ĕн, паллатăр пуль вĕт эсир мана?

Пуш кĕленче ăшĕнче шăна сĕрленĕ пек илтĕнчĕ врач сасси. Хай, хăшĕ-пĕрисем, куçкĕрет пĕлсе тăраççĕ пулин те, паян мĕнле кун пирĕн,—тесе ыйтаççĕ. Пшибышевский врач та çавăн йышши çын пекех туйăнчĕ Иренăна.

Ĕнтĕ сăмах хушма та аптраса тăчĕ Ирена; врача ӳкĕте кĕртес шанчăкне йăлтах çухатрĕ вăл.

— Тепре курнăçиччен, апла пулсан...

— М-м... тепре курнăçиччен... Чимĕр-ха, йăмăкăм, хăвăр килйышăра хисеп тăвас кăмăлпа çеç чарса тăрам-ха сире... Тепĕр икĕ злотых хушса парас теместĕр-и? Ăнланатăр-и мана, икĕ злотых,—вăл икĕ пӳрнине çӳлелле тытса кăтартрĕ.

Ирена пĕрре урайĕнчи симĕс кавир çине, тепре—врач çине пăхса илчĕ.

— Çирĕм икĕ злотых хушса памалла пулсан та шеллемĕттĕм, çитес кунсенче тӳлемелле пулнă пулсан эпĕ...—терĕ вăл.

— Иккĕшне халех хушса парас пулать ĕнтĕ, ытти ӳлĕмччен кĕтеслеме те пулĕ.

Иренăшăн пулсан, нимĕн те шел мар, амăшĕ çеç хăвăртрах сывалтăрччĕ.

— Каçарăр,—терĕ врач,—ыйтса пĕлем-ха, ăçтарах пурăнатăр эсир?

— Çак урампах каймалла, икĕ квартал урлă, çитмĕл тăваттăмĕш çурт, аялти хутĕнче пурăнатпăр...

— Машинăпах килтĕр пулĕ эсир?—халатне тăхăнма тытăнчĕ врач.

— Вельможнăй пан Пшибышевский, хăвăрах чухлама тивĕç-çке, машинăпа пулнă пулсан, эпĕ çапла йăлăнса çӳренĕ пулăттăм-и?

— Машина пулмасть апла?

— Трамвайпа юрамĕ-ши?..

— Çук! Çук! Сăмах та пулма пултараймасть, сăмах та!.. Ăнланатăр-и эсир?—тăхăннă халатне вăрвар хывса пăрахрĕ врач.—Машинăсăр эпĕ пахчана çеç тухкаласа кĕретĕп те... Именме пĕлесчĕ!..

Ирена тухса кайрĕ.

Каллех Фурмановичсем патне кайма тивет ĕнтĕ. Нимĕн тума та çук...

Вăл Фурмановичсем патне çитрĕ.

Алăк умĕнче пĕр хура мăйăхлă çын тăрать. Ирена çине темĕн асăрхарах пăхрĕ вăл. Ирена çывхарсан тин, усăнарах тăран çунатлă шлепкине пусса лартрĕ те, çаварĕнчен тĕтĕм мăкăрлантарса, панель тăрăх наянăн пăркаланса утрĕ.

Ирена ун çине пăхса тăмарĕ. Тӳрех пӳрте кĕме хăтланчĕ. Анчах шăпах пăлтăр алăкĕ умĕнче полицейский тăнине асăрхасан, шартах сиксе, каялла чака пуçларĕ.

— Кĕрес пулать, йăмăкăм, кĕрес пулать!—янăрарĕ полицейски сасси.

Яри уçса пачĕ вăл пăлтăр алăкне. Ирена хăра-хăрах пӳртелле кĕчĕ.

V

Арăш-пирĕш тустарнă япаласем. Комод—урай варринче. Куçкĕскисене çĕре антарса хунă. Тӳшекминтерсене те тустарса пĕтернĕ: урайĕнче тĕксем сапаланса выртаççĕ. Ăçта пăхнă унта—кĕнеке. Алăк умĕнче—пĕр полицейски тăрать, начальникĕ пулмалла, кокардне кĕмĕл пек шурă йăрăмпа кăшăлланă. Тепри—çĕрте выртакан кĕнеке хуплашкисене пĕр хĕрхенӳсĕр вăтăра-вăтăра ывăтать, уçкаласа пăхать, документсем шырать, имĕш. Килхуçи алăк патĕнчи полицейски умĕнче юпа пек хытса тăрать, унпа пĕрлех—арăмĕ, икĕ çамрăк ачи—пĕри те нăшăкламаççĕ.

— Урăх çук!—терĕ кĕнекесем патĕнче мутланакан полицейски.

— Миçе тупăнчĕ?—ыйтрĕ тепри.

— Çаксем çеç.

Алăк умĕнче тăракан полицейскине икĕ тетрадь тыттарчĕ вăл.

Фурманович вăл тетрадьсем çине Совет Конституцине çырса илнĕ пулнă.

— Пурте «хĕрлисем» вĕсем,—терĕ вăл, тетрачĕсене тыттарнă май.

Иренăна, те вăхăтсăр пырса кĕнĕрен, лайăх мар пек туйăнчĕ. Килйышсене пĕр сăмах та чĕнме юраманнине ăнланать ĕнтĕ вăл. Пуçне тайса илнĕ хыççăнах тухса кайма тăчĕ.

— Э-э, чимĕр-ха, пĕр килсе кĕнĕскере, васкама кирлĕ мар!—йĕкĕлтенĕн сăмах хушрĕ ăна алăк патĕнче тăракан полицейски.

— Эпĕ вĕсем патне çеç килнĕччĕ...

— Пĕлетпĕр-ске эсир пирĕн пата килменнине? Кам пулатăр эсир?

Иренăн сехри хăпсах тухрĕ. Тухса каяс тесе, тата тепĕр хут та туртăнса пăхрĕ вăл. Çула пӳлсе хунă полицейски ăна чарса тăратрĕ.

— Епле чăрсăр... Ухтарас ăна та!

— Итлетĕп,—терĕ тепри, йӳнсĕр сасăпа.

Çавăнтах вăл Ирена патне лăтăртатса пычĕ.

— Мĕн хăтланатăр эсир? Эпĕ врач патне тесе килтĕм, аннем вилес пек выртать, эсир пур!..—тарăхсах кăшкăрма тытăнчĕ Ирена.

— Ун пек сăлтавсен тĕрекĕ çук... Улталас теместĕн-и эс пире?

Шăпах çав самантра, хайхи, урамра каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрекенни, хура мăйăхли кĕчĕ. Виртлешнĕ пек пăхкаларĕ вăл ун-кун.

— Куратăр пуль!—çутатрĕ вăл вĕт çеç шăлĕсене.

— Ку тата?— Ирена çинелле пуçне пăрса ыйтрĕ полицейски.

— Ăна пĕлместĕп.

— Куçлани мар-и?

Хура мăйăхли пуçне пăркаларĕ.

— Мĕн ятлă эсир?

— Ирена Квятковская.

— Ăçта пурăнатăр?

Ирена хăй адресне пĕлтерчĕ.

— Халлĕхе кайма пултаратăр.

«Епле-ха апла—халлĕхе»—тесе ыйтасшăнччĕ Ирена. Анчах ыйтса-туса тăмарĕ, полицейски аллинчен вĕçерĕнсенех, хăй те сиссе юлаймарĕ, урамалла вăркăнса тухрĕ. Хăраса ӳкнĕрен пулас çав, çурма çула çитсен тин хăй килелле кайнине тавçăрса илчĕ вăл.

Амăшĕ çав-çавах вăйсăр.

Каç пулсан вĕсем патне Стася пычĕ. Стася яланхи пек васкавлăн калаçмарĕ. Вăл Ирена амăшĕ валли эмел илсе килнĕ пулнă. Пӳртре тăма лайăх мар тесе, Иренăна вăл тулалла чĕнсе тухрĕ.

— Кама чĕнесшĕнччĕ вара эсир?—ыйтрĕ Стася, врач çинчен сăмах хускатсан.

— Тадеуш старике... Килте пулмарĕ те вăл. Пшибышевский патне кайрăм...

— Пшибышевский патне?.. Вăл нимĕн те пĕлмест теççĕ-ске.

— Вăл та пулин килсе пăхма килĕшмерĕ-ха, машина ыйтать.

— Итле-ха, Ирена, ман пĕр палланнă ăста врач пур, кунтан инçех мар пурăнатчĕ-ха вăл.

— Адаш-и, леш Фурмановичсем-и?

— Шăпах çавсем.

— Вĕсене паян măшăрĕпех арĕслесе кайрĕç.

— Епле апла?..

Ирена хăй пĕлнĕ пеккине, вĕсене мĕншĕн арестленине ăнлантарса пачĕ.

— Ăслă çынччĕ çав вăл, хурапа шурра уйраканскерччĕ.

— «Хĕрлисем» терĕç вĕсене.

— Кама ан калаччăр ĕнтĕ халь çавăн пек? Măшкăла хирĕç тăрсан—коммунист теççĕ, пире ĕç парăр тесен—коммунист, халăхпа ырă чĕлхепе калаçсан—коммунист пулатăн. Аптрамалла! Эпĕ хама та «хĕрлисенчен» уйăраймастăп ĕнтĕ,—терĕ Стася, хула таврашнелле пăхкаласа.

— Итле, Стася, асăрханарах çӳре. Вĕреннĕ чухнехи ирĕк шухăшусене аса илме пултарĕç... Вĕсене шанма хĕн.

— Ĕнтĕ... çынпа пĕрле, Ирена. Тăлăх мар эпĕ.. Пĕр амаланнă ĕмĕтĕмпе ĕмĕр вĕçне тухмалла пулсан та, шикленсе тăрассăм çук. Пĕлетĕп, чăн та ĕнтĕ, çулĕ—тумхахлă... Ĕненсем, Ирена, кирек мĕн пулсан та... асăмра эсĕ пулăн, сана эпĕ, шухăшăмсене юратнă пекех, юратăп.

Ытти чухне кăмăла ăшăтакан кулăпа çиçсе тăракан Иренăн сăн-пичĕ салхуланчĕ. Çине-çинех шухăшсем капланса килчĕç. Пĕлĕт татки витĕр йăл-ял курăнса каякан хĕвел çути пек, ача чухнехи кунсем курăнанçи пулчĕç. Епле лайăх та канăçлă пулнă иккен ача чухне, нимĕн çинчен те шухăшлас килмен. Пурте çутă, илемлĕн курăннă... Урампа иртсе пынă чух та çавах... епле мăнаçлă кăмăлпа иртсе çӳренĕ вăл. Пурнăçра инкек курасса, куççулĕ тăкасса, хăçан та пулин кавча пыма килĕшменшĕн кӳреннĕ кӳршĕсем пуласса аса та илмен вĕт-ха вăл? Çапла пулмасăр!.. Ун ĕçĕ пулнă-и вăл?

— Виртлешнĕ саманара пурăнма тиврĕ пире,—терĕ Стася.—Халиччен эпир çав сутуçăсемпе хапрăкçăсен илемлĕ сăмахĕсемпе сырлахнă. Вĕсен сăмахĕсенче çăлăнăç та шыранă-и тен?.. Ĕнентерме те хăтланчĕç вĕсем пире. Вăрçă мĕн пулать-и—турă ирĕкĕ терĕç, чир-чĕр çакланать-и—каллех турă ирĕкĕ. Халăх чĕри Хĕвелтухăçнелле пăхать, Советсем çăлĕç пире.

— Стася, паллаймастăп сана паян эпĕ.

— Эпĕ эс палланă çынах. Чĕрене çеç эс палланă тыткăнран вĕçеретĕп. Туятăн-и, эс, ирĕкри кăмăл туртăмне? Ют çын асапĕ ман чĕрене пусать, ют çын тарне курсан куççулĕм тăкăнать, ют чĕлле туртса илсе çиекене курсан,—хăсас килет. Таса чĕреллĕ çын пулма май килмĕ тетĕн-им? Çак ирсĕр нишлĕхе ĕнтсе хамăр ĕмĕтленнĕ коммунизмлă пурнăçа тума пулмĕ тетĕн-им?.. Фурмановичсене илсе каясса та малтанах пĕлнĕ эпĕ. Тата ытти лайăх çынсене те илсе кайĕç. Анчах халăха илсе кайма çук.

— Турăçăм, пиллеччĕ, турăçăм,—сăхсăхрĕ Ирена.

Инçетре ачасем макăрни илтĕнчĕ. Пуçне сĕнкнĕ çынсем пĕр-пĕрне сăмах чĕнмесĕр иртсе каяççĕ.

Ирена ассăн сывласа илет.

— Ыран мĕн пулас пур?—тенĕ пек пăхать вăл Стася çине.

Вăл темиçе хутчен те сăхăмçă Стефан çинчен сăмах хускатма тăчĕ, анчах хăюлăхĕ çитеймен пирки, нимĕн те калаймарĕ.

VI

Эрне иртрĕ çавăнтан вара. Ирена амăшĕ вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пычĕ. Ăна больницăрах выртармалла пулчĕ. Ашшĕн пĕр уйăхшăн илнĕ укçи амăшне сыватма чĕнтернĕ врачсене тӳлеме те çитмерĕ. Çавна кура Ирена хăех ломбарда çӳреме хăнăхрĕ. Кĕпе хыççăн кĕпе кайса хыврĕ вăл унта. Çийĕнчи кĕпи вĕççĕн кăна тăрса юлсан вара, çуртри ăпăр-тапăра çĕкле пуçларĕ. Витри, çатми, хальхинче тата сăмаварĕпе яшка пĕçермелли кастрюльне те илсе кайрĕ.

Маларах леçсе панă япаласен ломбардра тăрас вăхăчĕ иртсе пырать. Ломбард хуçи Ирена çине савăнарах пăхма пуçларĕ.

— Сывлăхăр мĕнле сирĕн, пикеçĕм?—ыйтрĕ вăл пĕррехинче Ирена пырсан.

Епле тавăрса каламалла ĕнтĕ ăна? Начаррине пĕлсе тăнă çĕртенех ыйтать вĕт-ха вăл?

— Майĕпен çеç,—терĕ Ирена ерипен.

— Паян мĕн илсе килтĕр тата?

— Ирена сăмаварĕпе кастрюльне пырса лартрĕ.

— Мĕн чухлĕ парас ĕнтĕ кусемшĕн.

Ломбард хуçи сăмавара пӳрнипе шаккаса пăхрĕ.

— Çĕнĕ мар ĕнтĕ, ак кунта кăштах çутти те кайнă пек-ха,—терĕ вăл, сăмавар çинчен выçăхнă куçĕсене илеймесĕр,—иккĕшиншĕн сакăр злотых парас тетĕп.

— Апла ытла сахал пулать, хисеплĕ çыннăмăр, пĕлетĕр ĕнтĕ, хăвăр туянас пулсан, эсир ăна хĕрĕх злотыхпа та тупас çук...

— Ак ăçта килсе çаклатрăр тата! Кирлĕ мар вĕт вĕсем мана! Каялла илсе кайма пултаратăр.

— Итлесемĕр, кăмăл хушнипе килмен вĕт-ха эпĕ, асап чури эпĕ, ăнланатăр-и?

— Вунă злотых çитет, унтан ытлашшине пĕр чĕптĕм те ирттерес çук, эпĕ ăна пĕрер уйăх тытса тăрăп, унччен пĕр-пĕр ĕç пекки тупкалăр-и, тен... Кайран вара, вăхăчĕ çитсен, килсе илме те пултаратăр. Вунвиçĕ злотых кăларса паратăр та, сăмаварăр каллех хăвăрăн пулать.

Иренăн килĕшмеллех пулчĕ. Кам пĕлет, вăл вăхăталла ашшĕ те укçа илĕ, шет, хăй те мĕнле те пулин алă ĕçĕпе йӳнеçтеркелесе пурăнĕ.

— Итлĕр-ха, пикеçĕм,—терĕ ломбард хуçи,—çĕвĕ çĕлемелли машинăр пирки пĕлтереймерĕмĕр пулас сире?

— Пĕлтермелли пурччĕ-им?

— Сутрăмăр ĕнтĕ ăна.

— Сутрăр?

— Сутрăмăр. Леш, хайхи, сирĕн хуçăр туянчĕ, ун çинчен сире вăл пĕлтерме пулчĕ-çке?—лавкка урати çине йăпшăннă майлăрах сĕвенчĕ ломбард хуçи.

„Каллех Стефан... Мĕн тунă эпир ăна? Мĕншĕн тĕп тăвасшăн юнăхать вăл пирĕн килйыша? Мĕншĕн?..“

— Хăвăртрах сутас терĕр пуль ĕнтĕ эсир.

— Каялла илес кăмăлăр пурччĕ-им?—ыйтрĕ ломбард хуçи.

— Уншăн каламастăп эпĕ...

— Пĕлсемĕр, пикеçĕм, пирĕн пата куллен темĕн чухлĕ çын килет. Çынран татăк тăмастпăр эпир. Вăл тĕлĕшрен кантурĕ тухăçлă ман. Укçаллă çын хăйĕн таварне кунта хурса чăрманас çук ĕнтĕ, çапла мар-и? Эсир те акă тĕрлĕрен вак-тĕвексем илсе килтĕр, уншăн эп сире укçа патăм-ха... Эсир вĕсене пĕр-пĕр ырă кун тӳлесе илме, каялла илсе кайма ĕмĕтленетĕр пуль-ха, ĕненсемĕр, пикеçĕм, кунта килнĕ чух пурте çапла шухăшлаççĕ пуль те, анчах каялла илсе каякансем питĕ сахал пулаççĕ.

Ломбард хуçи кăштах чăранса тăчĕ.

— Чимĕр-ха,—терĕ вăл малалла,—пĕлтермесĕрех юлаттăм: Стефан сирĕн япалăрсене пурне те туянма пулчĕ, сире çывăх курать пулас вăл, хĕрхенсе каласать...

— Çавăнпа-иç эп килсе хунă япаласене туянма васкать?

— Кам пĕлтĕр ĕнтĕ ăна-кăна.

Çак илемсĕр хыпара илтсен Ирена йĕрес патнех çитрĕ. Çапах та ломбардра йĕмерĕ вăл. Унтан тухсан та куççульне палăртмарĕ, килне таврăнсан тин ашшĕ каниччен йĕчĕ вара.

Ашшĕ ĕçрен таврăнчĕ.

— Ирена,—терĕ вăл,—аннӳ патне кайса килес тетĕп эпĕ.

— Питĕ аван пулнă пулĕччĕ.

— Мĕнле хыпарсем пур?

— Кӳршĕсенчен никамран та укçа тупаймарăм,—терĕ Ирена.

— Вăл çавă ĕнтĕ... Нимĕн те илтмен-и Стася çинчен?

— Çук, илтмен.

— Паян ăна тытса хупнă теççĕ.

— Кама?!!

— Стасяна тенĕ пек илтрĕм.

— Суя вăл!

— Чăн калатăп, çавах терĕç.

Тĕлĕнсе, хĕрелсе, кăвакарса кайрĕ Ирена.

Тăвăллă çумăр хыççăн ахаль те тулли пĕвене шыв шăнăçми тулать, вăл, ниçта кайса кĕрейменнипе, çыранран тухать, çĕрĕшсе тайăлнă свайсене тăпримĕнĕпех тăпăлтарса кăларать... Çавăн пекех пулчĕ Иренăн та: тулса çитнĕ куççулĕ теменле тĕреклĕ кăмăла та пăхăнса тăмарĕ.

— Ытлашши хуçалас мар, кăларĕç-ха, тен,—лăплантарасшăн пулчĕ ăна ашшĕ.

— Каларăм эп ăна, каларăм-çке...

Кăлăхах мĕн Иренăна йĕме чарасси. Çавна кура ашшĕ, ун çине кулянса пăхса илчĕ те, тухса кайрĕ.

Ирена хăйсемпе хире-хирĕç пурăнакан хĕр тантăшĕ патне кайрĕ. Лешĕ ăна Стасяна тытса кайни çинчен каласа пачĕ. Халĕ ĕнтĕ ку хыпара вăл иккĕмĕш хут илтрĕ. Темĕн пек ĕненес килмесен те, çав йывăр хыпара ĕненмеллех пулчĕ. Стася фанера фабрикĕнчи рабочисем хушшинче, ĕçрен кăларнисем майлă пулса, забастовка тума чĕнекен прокламацисем сарнă пулнă. Часах тытса хупас çукчĕ-и тен ăна, пĕр провокатăра вăхăтра палласа илнĕ пулсан.

Ирена хăйĕн вăркана ăшчикне пусарас тесе, пĕрре пӳртелле кĕчĕ, тепре—тулалла тухрĕ. „Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, мĕн тăвас?“ тесе тарăхнă самантра, —кам кĕтнĕ ĕнтĕ ăна,—пăлтăрта ăна шăпах Стефан тĕл пулчĕ.

— Чĕререн хĕрхенетĕп сана, Ирена,—терĕ вăл.

Ирена ун çине пăхмасăрах пӳртелле чупса кĕрсе кайрĕ.

Сехет хыççăн сехет, кун хыççăн кун иртет. Çапла тертленсех эрне те иртсе кайрĕ.

Ирена амăшĕ кăштах сывалнă пек пулчĕ. Ăна ăн кĕрсе çитрĕ, çавăн хыççăн вăл хăех вырăн çинчен тăрса ларакан пулчĕ.

Ирена ун валли апат шыраса супрĕ. Выçлăх килĕрен киле çӳрет. Ĕç ниçта та тупăнмасть, анчах мĕнле пулсан та, мĕнле кансĕр пулсан та, амăшĕ больницăран тухнă кун Ирена калама çук савăнчĕ.

VII

Кашни иртен кун хăйне уйрăм хура сăн-сăпачĕпе паллаштарать. Сутмалли урăх нимĕн те çук. Çуках ĕнтĕ. Васкаса çывхарнă хăрушă выçлăх пĕтĕм килйыша хăратма пуçларĕ. Амăшĕ çаплах-ха вырăн çинче выртать. Вăйсăр вăл.

Ирена чӳречĕ умне пырса тăчĕ. Тулта çил макăрать. Урăх пĕр сас-чӳ те илтĕнмест.

Çие тăхăнма нимĕн те çук, йăлтах сутса пĕтернĕ ĕнтĕ, вăл тарам-ха... Анчах ыран... ыран мĕн çимелле?.. Сывалакан амăшне выçă усрама çук, ĕçлекен ашшĕ валли те апат хатĕрлемелле. Умра тĕттĕм, салху.

— Çăлатăп эпĕ сире,—терĕ шăппăн çеç Ирена. Хăй те илтеймерĕ пулас вăл çав сăмахсене.

— Мĕн пулчĕ сана, Ирена?—темĕн сиссе ыйтрĕ амăшĕ.

Ирена амăшĕ патне пычĕ те ун чĕрки çине пуçне

хучĕ. Амăшĕ имшеркке аллипе унăн ĕсĕкленипе хускала-хускала илекен хулпуççине ачашласа çупăрларĕ.

— Куççульне хĕрхен, Ирена, ĕмĕр тени вăрăм, ӳлĕм кирлĕ пулĕ. Эсĕ çамрăк-ха, сан куну—малта, ак эпир, ваттисем, епле те пулин пурăнкалăпăр, пире ĕмĕрĕпех çавăн пек пурăнма пӳрчĕ...

Ирена ура çине тăчĕ. Унăн куçĕ теменле симĕсĕн ялкăшнă пек пулчĕ. Арпашнă çӳç пайăркисем шурăхнă çамкине хупларах тăраççĕ.

— Çăлатăп эпĕ сире!—тесе кăшкăрчĕ те вăл, алăка хыттăн хупса, тулалла тухса кайрĕ.

— Ирена, кĕрсем ӳкĕте,—шикленсе вырăн çине тăрса ларчĕ амăшĕ. Юлашки хевтине пухса ура çине тăрасшăн пулчĕ вăл,—çĕкленеймерĕ.

— Ашшĕ, ашшĕ!

Ун сассине хирĕç сасă пулмарĕ.

Ирена çав вăхăтра пусма картлашкисем тăрăх хăвăрттăн çӳлелле улăхрĕ. Тӳрех Стефан патне пырса кĕчĕ вăл.

— Çăл вилĕмрен ман атте-аннене, ĕмĕтсĕр, эпĕ сан мăшăру пулма килтĕм,—терĕ вăл, халран ӳкнĕ сасăпа.

— Ирена!—илтĕнчĕ Стефанăн хыпăнчăк сасси.

Вара вăл ларнă çĕртен йăпăр-япăр сиксе тăчĕ те çăмламас аллипе Иренăна çавăрса тытрĕ.—Хăвах килессе туйсах тăраттăм эпĕ, пурпĕрех эс урăх çĕре ниçта та каяс çукчĕ,—терĕ вăл.

Ирена йĕрсе ячĕ.

„Çакă-и вăл телей тени? Ĕмĕтленни-им ĕнтĕ çакă? Çамрăклăх пирĕншĕн мар иккен“—терĕ Ирена тепĕр кунне.

Хăйĕн çамрăк ĕмĕрне вăхăтсăр татнăшăн амăшĕ ăна ӳпкелешме пăхнăччĕ те:

— Сире кунçул кӳресшĕнччĕ эпĕ,—терĕ Ирена ăна хирĕç.

— Апла тумалла марччĕ, хĕрĕм...

— Мĕнле тумаллаччĕ?

Иккĕшĕ те йывăррăн сывласа илчĕç.

— Хам айăплине пĕлетĕп эпĕ, аннеçĕм...

Каç пуласпа ломбарда хывнă япаласене Стефан хăех каялла тиеттерсе килчĕ...

Ирена ик-виçĕ кун хушши пĕр сăмах чĕнмесĕр çӳрерĕ. Нимĕн тума пĕлменнипе, шăлт ухмаха тухнă çын пек пырса кĕчĕ вăл амăшĕ патне. Амăшĕ умĕнче йĕре-йĕре ăнран каяс вĕçне çитрĕ. Хĕвел анас умĕн çеç вăл, лара-тăра пĕлмесĕр, урамалла тухрĕ. Хăйне хирĕç пулакан çынсем çине пăхмарĕ вăл, кам-кам иртсе çӳренине те пĕлесшĕн пулмарĕ.

Паллана сукмак ăна Стасясем патĕнчен уялла ертсе кайрĕ.

Инçетри ката урлă кармашса пăхакан хĕвел мамăк евĕрлĕ пĕлĕтсен ушкăнне кĕренлетрĕ. Мерченпе эрешленнĕ пĕлĕт хĕррисем ытарма çук илемлĕн йăлтăртатрĕç.

Кӳренӳсĕр хĕвел! Вăл ĕшеннĕ шăм-шака вăй кĕртет, ваттине йăпатать, çамрăкне аслă кун сунать. Каç кӳлĕм çакăн пек чеченĕн анать вăл, ирхине—чĕре хĕпĕртесе тăмалла хĕрелĕ, юрлăç кайăксем, тĕнче, яланхи пекех, илемлĕ пулĕ, анчах телейсĕр кунçул шăпи Иренăна пĕрмаях кӳрентерсе тăрĕ-шим?

Ирена пурăнас ĕмĕтне çухатнă пек пăхать юнланнă хĕвел çине. Ак вăл пĕлĕт айнелле кĕрет. Унăн юлашки ярăмĕ самантлăха Ирена куçĕ çине ӳкрĕ, йăмăхтарчĕ ăна. Умра теменле хура мĕлкесем вылянă пек пулчĕç. Шухăш тĕлĕрĕвĕ мар-ши ку? Тĕлĕрӳ пулма пултарать-ши нимĕн шухăшлас килмен чух?

Ирена хăй те сисмерĕ, темшĕн, чарăнса тăчĕ. Астунă чух пушмакне хыврĕ те, вĕсене иккĕшне те хăрах аллине тытрĕ.

Епле çемçе иккен ешĕл курăк. Тарласа пăшăхнă урана уçăлтарать вăл, ӳт-пӳ те хăйне кăштах канăçлăх тупнă пек туять... Кăмăл çеç сĕвrĕлнипе тăрать.

Акă хайхи вĕсен Стасяпа çӳренĕ вырăнĕ. Кунта вĕсем пĕр кăмăлпа та пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе кунçул çинчен, юрату çинчен калаçнă... Çавсене аса илсен чĕре хĕсĕнет, ăна тапса тăмашкăн та тăкăс. Ура пусмалли вырăн та хускалнăн туйăнать.

— Сана улăштартăм-им, Стася,—терĕ Ирена пăшăлтатнă сасăпа,—каçар мана, çырлахтарăп эпĕ хам айăпăма, йывăра ан илсем... хăватсăр эпĕ, хăватсăр...

Вăл чăнкă çыранран иртсе айлăмалла анчĕ. Шыв хĕрринчи шурăхнă чул çине тăчĕ. Сивĕ те мар шывĕ. Явăнса килен хумсем ун урине ачашшăн çуса иртеççĕ те, вăл кăштах çӳçеннĕ пек пулать.

Анатарахра кĕрленкĕ шавлать... Ерипен кăна каç шăвăнса хăпарать. Çанталăк тӳлекленнĕçемĕн тӳлекленсе пырать. Умра кĕмĕлленсе йăлкăшакан шывра Ирена хăйĕн сăнне курать... Ăçта вăл? Кам илсе килнĕ-ши ăна кунта? Çук, ун çинчен шухăшламасть халь Ирена. Кирек ăçта пулсан та, пурĕ-пĕрех мар-им ĕнтĕ ăна? Çук, чăтăмсăр пулман вăл, анчах кирек мĕнле чăтăмăн та виçи пур, чăтăм татăлса тухас вĕçне çитсен вара, этем тени хăйне хăй, хăй мĕн тума шухăшланине те чухлайми пулать, шухăшĕсем ун пăтранма пуçлаççĕ. Çавăн пек самантах чăтса ирттерет мĕн Ирена та... Чи лайăх, мĕн ачаран упраса пурăннă хитре ĕмĕчĕсем сӳннĕ унăн, хăй умĕнче кăшт та пулин, пĕр ĕмĕт пĕрчи те пулин йăлкăшса илнĕ пек туйăннă пулсан, ун ăс-тăнне нимĕн те тĕтрелетмен пулсан—çак вырăна килес те çукчĕ-и тен вăл?

Ак ун куçĕ умне ялан чĕмсĕр çӳрекен ашшĕ курăннă пек пулчĕ, унтан шурса кайнă сăн-питлĕ амăшĕ... Унтан—Стася... паллана сăн-питсем вĕлтлетсе иртеç... Шухăш вырăнта тăмасть мĕн, йĕрĕнчĕк Стефан сăнне те илсе тухма ӳркенмерĕ вăл. Стефан-и? Çук! Ун чури пулма килменччĕ Ирена тĕнчене...

Кĕрленкĕрен кăшт тăварахра, юханшыв хĕрринче кимĕпе ишекен пулăçăсем курăннă пек пулчĕç. Анчах вĕсем те самантлăха çеç... Ирена шыв хĕррипе кĕрленкĕ патнелле утрĕ, чăнкă çĕре çитрĕ.

Каллех Стася сăнĕ курăнса кайнă пек пулчĕ те... çухалчĕ. Ирена малалла туртăнчĕ, хăй савнин ытаменче çалăнăç шырарĕ пулас та вăл, анчах... хăй мĕн тунине тавçăрса илме ĕлкĕриччен, чăнкă çĕртен аялалла ӳкрĕ.

Ӳкнĕ вырăнта шыв шампăртатрĕ, кĕмĕл тумламсем пĕрхĕнчĕç, ункăн-ункăн хумсем сарăлса лăпланчĕç.

Халĕ çеç хăпарнă уйăх çутинче Ирена ӳкнĕ тĕлелле васкавлăн ишсе çывхаракан пуläçăсен киммисем курăнчĕç. Мĕнле-ши, ĕлкĕрĕç-ши, çăлайăç-ши вĕсем Иренăна?